Ыйту – хурав

# Çынсем каланине шута илчĕç



**«Эпир Муркашри Октябре 50 çул урамри 40-мĕш çуртра пурăнатпăр. Пирĕн çурт умĕнче спорт оборудованине вырнаçтарасшăн. Эпир хирĕç. Йывăççене кастарасшăн мар. Вăл вырăнта пирĕн çуртра пурăнакансем канаççĕ, тумтир çакса типĕтмелли вырăн та унтах...»**

Çапла пăшăрханса шăнкăравларĕç редакцине.

Лару-тăрăвĕ мĕнре пулнине тӳрех чухларăмăр. Хаçат вулакансем те астăваççĕ пулĕ, маларах эпир Муркашри виçĕ кил картишĕнче хăт тата тирпей-илем кĕртес ĕçсем пулмалли пирки çырнăччĕ. Кунта çав ĕçсене тытăннă.

Муркашра «Формирование современной городской среды на территории Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики» муниципалитет программипе кăçал Октябре 50 çул урамри 36, 38, 44, 44а, 40, 42 çуртсен кил картишĕсенче те хăт кĕртессипе проект хатĕрленĕ.

**Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Андрей Мясников** каланă тăрăх, вырăнта пурăнакансемпе ку таранччен эскиз хатĕрленĕренпе виçĕ хутчен пуху ирттернĕ, проектпа паллаштарса пынă. Çапла проектпа килĕшӳллĕн асăннă çуртсен кил картишĕсенче асфальт çулсене юсассине, тротуарсене юсассине тата çĕнĕрен тăвассине, автомобиль лартмалли хушма вырăнсем йĕркелессине, картишсене тĕттĕм вăхăтра çутатса тăрассине, ача-пăча валли вылямалли лаптăксем йĕркелессине, саксем вырнаçтарассине тата ытти ĕç пурнăçлама пăхса хунă.

Программа пирки каласан, çак ĕçсене пурнăçлассине çынсем те хутшăнаççĕ. Проектпа пăхса хунă ĕç калăпăшĕн сумминчен икĕ процентне – çав çуртсенче пурăнакансен укçи-тенки.

Анчах та халĕ, çынсем спорт оборудованине ларттарма килĕшменрен, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ, «Моргаушская» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕн ертӳçи Николай Любимов тата ĕçе пурнăçлакан «Проксис» пĕрлешӳвĕн представителĕсем халăхпа тĕл пулса калаçрĕç.

Калаçу чăнах та хĕрӳ иртрĕ теме май пур – икĕ ен те хăйĕн шухăшне пĕр-пĕрин патне тĕрĕс çитерме тăрăшрĕ. Икĕ ене те ăнланма пулать.

Ял тăрăхĕн администрацийĕ нормативпа право акчĕсем, саккун ыйтнипе никĕсленсе, пулмалли ĕçсем пирки çынсене пĕлтерме пĕлтĕрхи ноябрьтен пуçласа пухусем ирттернĕ, проектпа паллаштарнă. Андрей Мясников каланă тăрăх, çав пухусенче проектпа килĕшменнине пĕлтерекен пулман, ял тăрăхĕн администрацине те сĕнӳсемпе пыракан пулман.

40-мĕш çуртра пурăнакансем вара кун пирки çак тавраршра техника ĕçлеме пуçăнсан тин пĕлнине калаççĕ. Хайхи, аслати кĕмсĕртетмесĕр арçын сăхă сăхмасть тенĕ пекех пулса тухать.

«Эпир кунта 30-40-шер çул пурăнатпăр. Кил картишне илемлĕхре тытса тăма тăрăшатпăр. Йăранĕсем те кунтах пирĕн. Илемлĕ вырăн...», – теççĕ вĕсем.

Йăранĕсем тенĕрен, Андрей Мясников хваттер хуçисене вăл çĕр муниципалитетăн çĕрĕ шутланнине аса илтерчĕ. Апла хваттер хуçисен вĕсене саккунпа килĕшӳллĕн харпăрлăха илмелле е унпа муниципалитетăн усă курмалла. Ку – урăх калаçу.

Çак вырăнта, проект тăрăх, нормативпа килĕшӳллĕн, çутă юпи пулмаллине каласан, çынсем каллех кăмăлсăр пулчĕç. Пире халĕ пуррипех çитет, хваттерсен çывăрмалли пӳлĕмĕсем çак еннелле тухаççĕ, тесе каларĕç. Йăранĕсем пулмасан кунта çум ахăрать, теççĕ. Çапла ыйту-хурав çине-çинех пулчĕ.

Пĕрлехи пухура пурпĕр пĕр йышăну патне çитрĕç: спорт оборудованине ку вырăнтан 44а çурт енне, кунти ача-пăча площадки çывăхне лартма йышăнчĕç.

Влаç халăха илтрĕ темелле. Çапах та вырăнти ыйтусене татса парассипе çыхăннă пухусене халăхăн та палăртнă вăхăтра активлă хутшăнмалла. Атту кайран курман, илтмен, пĕлместĕп темелле ан пултăр – вăхăт тăсăлать кăна.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

у – хурав

# ынсем каланине шута илчĕç



**пир Муркашри Октябре 50 çул
ри 40-мĕш çуртра пурăнатпăр.
 çурт умĕнче спорт оборудовани-
ырнаçтарасшăн. Эпир хирĕç. Йы-
не кастарасшăн мар. Вăл вырăнта
 çуртра пурăнакансем канаççĕ,
р çакса типĕтмелли вырăн та ун-**

пла пăшăрханса шăнкăравларĕç ре-
не.

ру-тăрăвĕ мĕнре пулнине тӳрех
рăмăр. Хаçат вулакансем те
аççĕ пулĕ, маларах эпир Муркашри
кил картишĕнче хăт тата тирпей-илем
с ĕçсем пулмалли пирки çырнăччĕ.
 çав ĕçсене тытăннă.

ркашра «Формирование современ-
ородской среды на территории Мор-
кого сельского поселения Морга-
го района Чувашской Республики»
ципалитет программипе кăçал Октя-
0 çул урамри 36, 38, 44, 44а, 40, 42
ен кил картишĕсенче те хăт кĕртесси-
оект хатĕрленĕ.

**тăрăхĕн пуçлăхĕ Андрей Мясников**
ă тăрăх, вырăнта пурăнакансемпе ку

таранччен эскиз хатĕрленĕренпе виçĕ хутчен пуху ирттернĕ, проектпа паллаштарса пынă. Çапла проектпа килĕшӳллĕн асăннă çуртсен кил картишĕсенче асфальт çулсене юсассине, тротуарсене юсассине тата çĕнĕрен тăвассине, автомобиль лартмалли хушма вырăнсем йĕркелессине, картишсене тĕттĕм вăхăтра çутатса тăрассине, ача-пăча валли вылямалли лаптăксем йĕркелессине, саксем вырнаçтарассине тата ытти ĕç пурнăçлама пăхса хунă.

Программа пирки каласан, çак ĕçсене пурнăçлассине çынсем те хутшăнаççĕ. Проектпа пăхса хунă ĕç калăпăшĕн сумминчен икĕ процентĕ – çав çуртсенче пурăнакансен укçи-тенки.

Анчах та халĕ, çынсем спорт оборудованине ларттарма килĕшменрен, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ, «Моргаушская» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕн ертӳçи Николай Любимов тата ĕçе пурнăçлакан «Проксис» пĕрлешĕвĕн представителĕсем халăхпа тĕл пулса калаçрĕç.

Калаçу чăнах та хĕрӳ иртрĕ теме май пур – икĕ ен те хăйĕн шухăшне пĕр-пĕрин патне тĕрĕс çитерме тăрăшрĕ. Икĕ ене те ăнланма пулать.

Ял тăрăхĕн администрацийĕ норматива право акчĕсем, саккун ыйтнипе никĕсленсе, пулмалли ĕçсем пирки çынсене пĕлтерме пĕлтĕрхи ноябрьтен пуçласа пухусем ирттернĕ, проектпа паллаштарнă. Андрей Мясников каланă тăрăх, çав пухусенче проектпа килĕшменнине пĕлтерекен пулман, ял тăрăхĕн администрацине те сĕнӳсемпе пыракан пулман.

40-мĕш çуртра пурăнакансем вара кун пирки çак тавраша техника ĕçлеме пуçăнсан тин пĕлнине калаççĕ. Хайхи, аслати кĕмсĕртетмесĕр арçын сăхă сăхмасть тенĕ пекех пулса тухать.

«Эпир кунта 30-40-шер çул пурăнатпăр. Кил картишне илемлĕхре тытса тăма тăрăшатпăр. Йăранĕсем те кунтах пирĕн. Илемлĕ вырăн...», – теççĕ вĕсем.

Йăранĕсем тенĕрен, Андрей Мясников хваттер хуçисене вăл çĕр муниципалитетăн çĕрĕ шутланнине аса илтерчĕ. Апла хваттер хуçисен вĕсене саккунпа килĕшӳллĕн харпăрлăха илмелле е унпа муниципалитетăн усă курмалла. Ку – урăх калаçу.

Çак вырăнта, проект тăрăх, норматива килĕшӳллĕн, çутă юпи пулмаллине каласан, çынсем каллех кăмăлсăр пулчĕç. Пире халĕ пуррипех çитет, хваттерсен çывăрмалли пӳлĕмĕсем çак еннелле тухаççĕ, тесе каларĕç. Йăранĕсем пулмасан кунта çум ахăрать, теççĕ. Çапла ыйту-хурав çине-çинех пулчĕ.

Пĕрлехи пухура пурпĕр пĕр йышăну патне çитрĕç: спорт оборудованине ку вырăнтан 44а çурт енне, кунти ача-пăча площадки çывăхне лартма йышăнчĕç.

Влаç халăха илтрĕ темелле. Çапах та вырăнти ыйтусене татса парассипе çыхăннă пухусене халăхăн та палăртнă вăхăтра активлă хутшăнмалла. Атту кайран курман, илтмен, пĕлместĕп темелле ан пултăр – вăхăт тăсăлать кăна.

**Н. НИКОЛАЕВА.**